К84.09(=Чув)
К27
Ч-50750



Марина Карягина Сăнакан Ăс

Национальная библиотека ЧР
4-050750

И84.09(=414)
К27

Марина Карягина

# Сăнакан Ăс

оклиб-1
вх-1
ЦРКИЦФ-1

Free Poetry
2016

## ТУПМАЛЛИ


В.Станьял. «Янрам - Юрă та Вăхăту!...» ........... 3
Юратса пăрах .............................7
Ахăр, усал Мал асамçине тĕксен ...................8
Сÿпĕлти, вакă, яка мар эп .......................9
Эпи ту! ............................... 10
Таса-таса юрăпа сÿнем-и ................... 11
Тарам ăш шăмарать .................... 12
«Ăру, тасал», – хистенĕ хам .................... 13
Типĕ ............................... 14
Тарăхтар, юрат, хăрат арăмна .................. 16
Несĕлĕсен ĕçĕ витерĕ Çĕнĕ куна ................ 17
Ах, ачу пурăнас ял ăçта ..................... 18
Савас-и .............................. 19
Тарать ăша тахат ....................... 20
Нĕрĕмĕр – ĕмĕрĕмĕрĕн ................... 21
Пурăнăç – хăналăх ...................... 22
Пурăнăç – уяв .......................... 23
Хĕлĕ! – Хĕльел! ........................ 24
Ыр ăс çук ............................ 25
Атă хăв халь – лапрара .................... 26
Хăюра сăнна, сăнара çырса, сана калап ........ 28
Этем, ерсе ан тарăхтар Ăна .................. 30
Несĕлĕмĕн ĕмĕчĕ! Çĕнел! .................... 31
Ахăл-ахăл ахрăм ....................... 32
Тăван çĕршыва ......................... 34



И-50750
Национальная библиотека
Чувашской Республики



**издательство** free poetry

**макет** и. улангин **графика** и. улангин **редактор** в.никитин

**отпечатано** в г. чебоксары в декабре 2016 г.

**тираж** триста экземпляров

## «Янрам - Юрă та Вăхăту!...»

**Марина Карягина – чăваш сăмахлăхĕнчи ку вăхăтри чи ăста çыравçăсенчен пĕри. Ăна ыттисенчен тӳрех уйăрса тăракан паллă енĕ – чăвашла та, вырăсла та çыпăçуллă таврăнккасем (палиндромсем) çырма пултарни. Ку енĕпе вăл Раççей литературинчи таврăнкка ăстисен ретне хăюллăн тăма пултарчĕ.**

«Чĕлхемĕрте çутçанталăкри мĕнпур хăват пуррине ĕнен те - ĕçле. Ану вĕçĕнче путене кĕтет. Путенине туп! Тыт!». Ку сăмахсене Марина Карягина «Хыпар» хаçатра пичетленнĕ пĕр калаçура каланăччĕ (2008, раштав,11). Çурлапа вырса ана вĕçне тухасси мĕн тутă каланине астăвакан кухаллĕн юлмарĕ пулĕ ĕнтĕ. Çавăнпах-тăр чăваш сăмахлăхĕн хирĕнче çăмăллăнах «путене тытма» ĕмĕтленекенсем, чĕлхемĕр телейне, самаях йышлă-ха. Çӳ хе те хулăн кĕнекесем тухаççĕ, хаçачĕ-журналĕ куллен сăвă-калав пичетлет. Анчах путенисем турă патне вĕçсе кайнă пулмалла, юлашки вăхăтра пĕр-пĕр сăвă-селтĕр, халай-сăскан е пăрасна кĕнеки ăшĕнче вĕсем ларнине курмарăм. Ăс-хакăл вичкĕнлĕхĕ тупăнмасть хайлавсенче, вунă хут каланине тепĕр хут чăмласа ларни нумай паянхи литературăра.

Марина Карягина хайлакан таврăнккасене (палиндромсене) вара ниепле те çынран илнĕ тесе калаймăн. Халиччен вĕсене нихăш сăвăç та, нихăш пăраснаçă та каламан. Таврăнккасене Валерий Андреев чĕлхеçĕ пухса сăнанине çеç пĕлетĕп. Паллах, таврăнккасем илемлĕ сăмахлăх картине кĕни-кĕменни пирки пыр тĕп ыратиччен тавлашса ларма пулать, анчах хамăр пĕр-ик çаврăм таврăнкка çавăрса парайсан, тен, тавлашма та юратчĕ.

Чăваш чĕлхи ăсти Марина Карягина таврăнкка хирĕнче халиччен никам тытайман путенесене тытса пĕтерчĕ. Унăн чи пысăк ăнăçлăхĕ – таврăнкка сăвă çырма пултарни. Ун пек сăвăсем тĕнчере пуррине халиччен илтмен те, вуламан та. Литература пĕлĕвĕн сăмахсарĕсемпе энциклопедийĕсем те шарламаççĕ.

Унта таврăнкка сăмахсем (куккук, кăпăк, кĕрĕк, шалаш), таврăнкка майлашусем (типĕ пит, ачаш ача, ÿрĕк кĕрÿ), таврăнкка пуплевсем (тусна çак ăшă каç ан сут), таврăнкка каларăшсем (Таруç ача çурат; ак шăпу, упăшка; ак ача – качака; ут, çĕрĕç ту) тата тем тĕрлĕ тĕслĕх те тупма пулать. Çавсене пухса, шыраса тупса шÿт те, çунатлă сăмах та, сăвă та, поэма та, пĕчĕк калав та йĕркелеме пулать.

Сăвă хывăмĕнче чи ансатти – калле-малле вуланакан пĕр, ик, виç йĕрке шыраса тупасси: «Эх, Çĕр, ырă тавăхăту, – терĕ чĕре, – тутă хăватăр ырĕ-çке!»

(«Тарам ăш шăмарать» сăвăран) Кăткăсраххи – калле-малле вуланакан сăвă çаври (строфа).

Ку кĕнекере ун пек уйрăм çаврасем çук, çавăнпа «Ыр ăс çук» сăвă варрине илетĕп:

... хăй алшăлу кĕлли пĕлнĕ:

Тĕл лекрĕ!

«Йĕм тĕп çĕре лекет» текелерĕç... –

Пĕтмĕ йĕркеллĕ, тĕнлĕ, пиллĕ,

«кулăшла» йăх!

Кăсăк япала вăл – сăмахсен таврăнкки (словесный палиндром). Малтан та, хыçалтан та сăмахшаррăн вуласан пĕр пекех пулса тухакан сăвăсене çапла калаççĕ. Ун тĕслĕхĕ вырăнне сăмахсарсем вырăс поэчĕн Валерий Брюсовăн сăввине илсе кăтартаççĕ:

Сăвă пуçламăшĕ:

«Волн колыханье так наяд побеждает стремленье,

Моря Икарова вал, как пламенеющий Нот...»

...........................................................................

Сăвă вĕçĕ: «Нот пламенеющий, как вал Икарова моря, – стремленье Побеждает наяд так колыханье волн».

Марина Карягина сăмахсен таврăнккинчен тахçанах иртсе кайнă. Унăн сăввин сăмахĕсене мар, кашни сăмахĕн сасси-саспаллисене кутăнла вуласа пырсан та сăвва пĕтĕмпех (поэмăна та!) чиперех каялла çавăрса кăларнине куратпăр! Ун пек тĕслĕх пуррине халиччен нихăш литературăра та

тĕл пулманччĕ, авангардистсен «Международная академия Зауми» тексне кăларакан «Другое полушарие» ятарлă журналĕнче те тупса вулаймарăм. Ку çав тери йывăр та кăткăс пулăм. Кашни пуçрах ун чухлĕ йĕкĕрле танлаштару çуралма та пултараймасть. Вăл та мар-ха – кашни çыннах çакăн пек тарăн сăвва-халая вуласа ăнланма хăват çитерейместь.

Таврăнкка – сăмахсен вăййи, сăмахсемпе шухăшсен кĕрешĕвĕ. Ăна хывасси шахматла выляса çĕнтерессинчен тем чуль хĕнтерех – чĕлхеçĕсенчен те пуринчен пулмасть вăл. Тен, калле-малле вуланакан сăмахсемпе йĕркесене тупса тултарма пулĕ, анчах вĕсене ăнланмалла, вĕçленнĕ шухăшлă пуплеве çавăрма шутсăрах кансĕр. Марина Федоровна вара пĕр кĕнекелĕх таврăнкка сăвăсем çырнă! Паллах, вĕсем эпир ялан вулама хăнăхнă сăвăсем пек мар. Ăнланса пырас тесен темиçе хут вулама тивет. Çунатлă сăмахсем нумай вĕсенче. Вырăн-вырăн ваттисен каларăшĕсем пек янăракан йĕркесем сиксе тухаççĕ: «Аманнă чуна чĕртĕ кĕлĕ. Кĕвĕ кала!» («Типĕ...» сăвăран), «Несĕлĕсен ĕçĕ витерĕ Çĕнĕ куна» (çав ятлă сăвăран), «Çисĕм çиçмĕ, хĕн ÿсмĕ, тĕтре...» («Сÿпĕлти, вакă, яка мар эп» сăвăран), «Лекрĕ, паллах, усалпа вăслату çилли пире...», «Çутă хăварар ватăлса. Каçарар, паллах, вăхăта» («Атă хăв халь – лапрара» сăвăран), «Сарă хирĕ чĕнет сыхлама! Вăрă тавраш ан уйлин ăрат çаратса пуйма!» («Хăюра сăнна-сăнара çырса...» сăвăран), «Турру – тăнна сăнакан» («Пурăнăç – хăналăх» сăвăран).

Марина Карягина таврăнккисенче самана таппи, самана сасси тапса тăрать. Кулленхи вак-тĕвек мар, философилле шухăшсем нумай унта. Çавна çыравçă Морзе паллисемпе хыпарланă пекех туйăнать мана.

Кĕнекери таврăнкка сăвăсенчен пĕрне тимлесе пăхар-ха. Çÿлтен аялалла вуласа тухар. Унтан вĕçĕнчен пуçламăшĕ патне каялла вулăпăр. Каялла вуланă чухне сăмахсене, тен, кăранташпа уйăрса тухсан аванрах курăнĕ: етем-ерсэ-

ан-тарăхтар-ăна... Юлашки йĕрке сăввăн пĕрремĕш йĕрки пулса тухать. Ыттисем те çаплах черетленеççĕ.



Этем, ерсе ан тарăхтар Ăна.
Тату, паха, шухă юн.
Акар асап та хуйхă...
(Юна – карă!)
Выçă-тутă хисепĕ чипер теç - нимĕрĕç.
Ĕмĕрӳ пӳр ĕмĕ...
Çĕмĕрӳ пӳр ĕмĕ...
Çĕрĕм!
Инçетре – пичĕпе сыхă-тутă çывăракан уйăх,
Юхать пасаракан уйăх,
Ушаха путать, анăрать...
Хăратна? Эсремете!

Мĕнле ӳкерчĕк тухса тăчĕ-ха умма. Тăван Çĕр чăмăрĕ нчен инçетре сивĕпе пасарнă тулли уйăх шуçать те шурлăха анса пытанать. Паха та таса юна чарса, картласа хурса асап та хуйхă тума хистеççĕ пĕрисем, вĕсен шучĕпе выçă-тутă пурăнни, ĕмĕрĕпех чир-чĕр те пӳр-сур яни чипер-мĕн... Турра çулăхса ан тарăхтар, усал-тĕсел. Ан хăра, этем. Сурса хур эсреметсем çине.

Пĕрре вуласан сăвва эпĕ çапла ăнлантăм. Тепре вуласан, ахăртнех, урăхла ӳкерчĕк, урăхла паллăсем те курăнма пултарĕç.

Таврăнккасем – сăмах, чĕлхе, шухăшлав вăйийисем, пуçватмăш. Вулакансем хăйсем юратакан сăмах вылявĕ сенче тăван чĕлхе путенисене тытасси пирки пĕрре те иккĕленместĕп. Çавăншăн тăрăшать Марина Карягина çыравçă.

Виталий Станьял, литература тĕпчевçи

* * *

Юратса пăрах,
выçса пурăн,
айлат,
уç утрав,
ака ту та пут рехете –
лёп ан савах!
Эп: *«Ӳтпе тасара – тараса»*, – теп.
Тӳпе хавасна пĕлет эхер:
Тупа ту та кавар ту,
çутал!
Янăру – пас!
Çывхарăп: астар, уй!



* * *

Ахăр, усал Мал асамçине тĕксен
*йшра вут çунать...*
Çунать те сӳнет!..
Сăмахăм!
Ййхăра тата та тарăх:
йăмăхам!
Ăс, тен, ӳсет – тан уç.
Тан уç: ту – варшăн.
Эс кĕтен-иç,
ма саламлас урăха?



* * *

Сӳпӗлти, вакӑ, яка мар эп:
Пӳлев ертӗ чӗтреве.
Чипер тӗтӗм сӳнӗ, хӗм çиçмӗ...
(çиçтерет сипет!)
Ёмӗр – эп-и чат?
Сӑнар: ӑмсанӑн нӑкӑ тӗкӗр ирӗкне.
Тен, мулу –
(çитрӗ чӗлхе!) –
пирти халап:
çакнашкал авӑн каçӗсем!
Эсӗ çакнӑ валак – шан –
Каçпала хитрипех,
Лӗчӗрти çул умне
тенкӗр ирӗкӗ тӑкӑннӑн –
ас мӑран,
*ӑс та чипер ӗмӗте пистерет.*
Çиçӗм çиçмӗ, хӗн ӳсмӗ, тӗтре...
Пичев ертӗ чӗтреве
лӳппер ама кайӑка...
Витлӗп: ӳс!

* * *

Эпи ту!
Тарават хамăр, хапăл,
Юмах-халапу – çăкра,
кăка – лав.
Айунта ан туй утна,
Пасартан анатра – сапантуй:
утна атну явала кăкаркăçупалах,
хам уйлăп ахрăмах та вара тутипе.

* * *

Таса-таса юрăпа сÿнем-и.
Ĕнтĕ пĕтнĕ:
*Кама усă мантару?!*
Янтă «хăвăлшăнах» халăх:
«Учук мар, сунар!..»
Çука, начар ăса майпен
«Ăш сасă» та хăйранă...

(Вăранăва сас-хурасăр ынатлам.
Анас  ват Атăла,
Ар, ухса тасатар ăша,
Ташăра тасатар ăша!
Ташăра тасатас!
Хура алă та – тав сана малтан,
Ырă сар – ухса савăнар,
*Ăвăнар йăха тăсасшăн!*
Эп, ямасăр ачана куçран,
усрам – ку чухă.)

Лаххан ăшлă вăхăтна юрат....
Намăсу – амак ĕнтĕ?
пĕтнĕ именӳ.
Сапăр уй,
аса тасат...



* * *

Тарам ăш шăмарать.
Çĕретĕп: *антăхăвупа чапу вăхăтна пĕтерĕç.*
Эх, Çĕр, ырă та вăхăту, – терĕ чĕре, –
тутă хăватăр ырĕ-çке:
Тўлек теветкел ўт,
хăлтă чунăр – ачалла!
Чарăну – чăтлăх...

* * *

«Ăру, тасал, – хистенĕ хам, –
Ахăл-ахăл, çухал!»
Ăçта пусас – хăруш:
*Çук калла пĕр алăк!*
Сăнара, саманана масаран
ăс кăларĕ, паллах...
Куç шурăхса супать.
*Çăлах, уçлăх!*
Алă хама хĕнет сыхласа, Турă!..

* * *

Типĕ...
*Пите пĕрет-и çăк – пуç ан тай.*
Харам сасăпа пăсас марах асна,
Вăйсăра – хавал!
Лăпах-им ху? –
хĕвел, типсе, сўнĕк кĕчĕ...
Пырăрта катрам-и?
Тертў-тару – кĕл, ак...
Ырра мар тулхăру,
*Куç, сăна мала!*
Кĕвĕ, кĕлĕ кĕтрĕ чану.
Чăнна мана кала – ту!
Манакан ăс, ав – харам туях,
Ал усма кам хăйĕ: тĕп – ас.
Тусану – чап, ăрат: хăпар!
Авăк куç пăвать:
ашăкла тăвати хăвата! –
шалта чеелетет
кăвар ăса «маймăлу»...
Çĕнĕ çеçке
(чечен-иç!)
çутам –
асама путап!
*Самана мĕлки – шакла пасар.*
Путех, эртел, кўтнĕ чуну – чĕн!
Тўклет – рехет упраса,

палка – шиклĕ:
манам асапа!
Тупам асамат уççине!
Чечек çеç ĕнĕ
çулăм ямасăр авăк –
Те телее?..
Чат лаша та Вăхăт –
авă, талкăшать:
«Авăп! Çук, кăвара пăхтарăп,
*а!-чуна сутса пĕтĕ йăх...»*
Ма?! Кам сулахай?..
Ут марах
пăяв асăнакана муталакан.
*Аманнă чуна чĕртĕ кĕлĕ,*
*Кĕвĕ кала!*
Ман ăс çук урăх.
Лутра марри калĕ: «Курать!»
Ўтре, тымарта катрăр-и
пĕчĕккĕн ўсес –
(питлевĕ хухми!) – хапăллава?
Харăс йăванса
харам сасăпа
пăсас марах Ятна:
çупкă çитерĕп е –
типĕ пит...



* * *

Тарăхтар, юрат, хăрат арăмна:
вит е тив!
Самана ют,
Ăраскалăм ăçта васкать аплах?
Шав ăйăр уйпала —
халсăр, ывăннă,
тусанпа сапăнса тусăннă –
ĕрĕхет.
Ни çухалма хăрать...
Тарăх хамла:
Хуçин те хĕрĕ «ăннă»?
(Сут – аснăп):
асапна сутăннă! –
вырăсла халап-юрă...
*Йăваш хал патак савать* –
Çăмăл, ак, сарă туя.
Намас витет-и?
Ванмăра?
Тарăхтар! Юрат! Хăрат!

* * *

*Несĕлĕсен ĕçĕ витерĕ Çĕнĕ куна:*

Канаш: шанăр, ав, анăра.
Авана – вăй!
Ĕçĕр – уй ĕçĕ, юп ĕçĕ:
пăхас, юсанас анам –
çĕр е çĕр аллă кас...
Çунатлă вăхăта
ватă хăвăлтан уçса кăларĕç,
ерĕç мана, сана,
суйса хăпĕçĕ, пуйĕçĕ,
юрĕçĕ йăвана варăна-варăна...
Шанакану кĕнĕ çĕре,
тивĕçĕ – несĕлĕсен.



И-50750
Национальная библиотека
Чувашской Республики

* * *

Ах, ачу пурӑнас ял ӑҫта?
Ялу!
Пӗр калас ӑрата:
каять-ҫке таса хал сая!
Кас ҫук енне – шеллевӗ:
хӗвӗнер – пӗтмӗ...
Ҫиҫӗн, кӳлӗ!
Мӗкӗлти ҫӑлти ытлӑ-ҫитлӗ кӗмӗл –
ӳкнӗ ҫиҫӗм тӗпренӗвӗ,
*Хӗвел – леш енне куҫса каясла...*
Хаса*!..
Тек ҫта якатар ӑса – лакрӗ!
Пулаять – ҫӑлайсан ӑру пучаха.

Хаса* – айӑплав.

* * *

Савас-и?
Пус-и пурăнăç е... çăлу?
Питле те, Турă, хăй – аллуна пус:
«Ăратлă. Тав этеме», – те.
Ниçта маса шеллемен-иç!
*ИккĕлеNÜ тени-çке чечен кĕвĕ çуратнă.*
Çуралнă ен-им – йăх тĕлĕ?
Палăкпа тан шăратнăн тар ăшна,
тапкăла пĕлĕт хăймине,
ăнла Руçăн ...тару çĕвĕкне,
чечек çине тӳн е лĕкки çине,
меллеш асамат çине,
теме те ватăлтар... –
ăсупа нуль
(*«Лайăх» ăру – тетелти пулă çеç,*
Ăнăр – упи-супи...):
Савас!..



* * *

Тарать ăша тахат*.
Улму, тен, ир тăкăннă – сут,
Ёнерӳ çта? – çут:
салт – салтас ут! Салт!
Салам-алик! Шарт!
Пахалап:
тулăк ăшлă кăшăлран
ăста вара тĕллевĕ хĕллен!
Ерĕп – кăмăллă çĕнĕ çурасу:
пуçару – çĕнĕ çăллă,
мăк-пĕренеллĕ, хĕвеллĕ,
таравaт сăнарлă, шăкăл-шăкăл...
Утпалах (аптрашки!) – лама!
Ласт-ласт усать,
Ласт-ласт уçать çӳренĕ
тусăннă кăтрине.
Тумлу... тахата шăтарать.

Тахат* - вăй-хăват.



* * *

Нёрёмёр – ёмёрёмёрён:
Тату та тутӑ хӑват саран хӑпрӗ.
Тивессисем тепре-шим?
Ме ҫутӑ – ҫуралу!
Патра – тараса.
Пуҫа тайманшӑн, Ар, ӑшӑм шӑмарать:
хӑнӑхам – усам...
Усала мантар,
ӑру ҫыххи – ҫип,
*хыҫа мар пусӑм!*
Ан кӑтарт, Руҫ, арпуна.
(Ант-намас – Пӑлхара.
*Кӑмӑл саслӑ вӑл, саслӑ!*)
Мӑкарах лӑп самантна ан упра,
ҫуртра-тӑк – намӑс упрама.
Ҫых пиҫиххи,
ҫур ӑратна Мала сума сума
хӑнӑхтар, Амӑш!
Мӑшӑр, ан ӑшнам...
Ята ҫупа саратар та
пулар усӑ ту ҫемми – шерпет!
Ме! Сиссе витӗр пӑх: нараста!
Вӑхӑт утать, утать...
Нёрёмёр – ёмёрёмёрён.

ПУРĂНĂÇ – ХĂНАЛĂХ

Ан ут – хăналăх-иç...
Иçмасса, кул!
Пухнă сан ăсанакан (ăсаннă) Турру
телей, ип –
*ану, чуну чăнласа типет...*
Аслă таврана сăнар:
сар, ай, асăма!
Нуша – (тасалăр!) –
юсанă-каснă каçсенелли:
çутал, Хăнам, хăнăхар.
Ачана, мутсăр та мутлă
халлă-халсăра халь парать ал –
хăнара та...
*Тутă хăвăллă Вăхăт утать аран* –
ăхлатар апла харăс.
Лахăл-лахăл тума, трăс! тума –
начара хăнăхман.
«Ăхлату» – çилленес, çакăнса кăнас,
уйрăлас аташу намăса ярасран.
*Ăсанар ватăлса теп!*
И, тасалнă чуну!
Чуна пиеле!
*Турру _ тăнна сăнакан.*
Асăн-асăн, хуплу кассам, çи.
Çыхăла нăхтуна!

## ПУРĂНĂÇ – УЯВ

Аснас Уява юрату хурăм уç.
(Тетел – сиенлĕ тĕлтех...)
*Эпĕ çутă хăват сарап –*
*Сăмах каласа тасалакан.*
Каç-кунăм, ан ур, ур – ĕмĕтех эс!
Аллу «Сан уссу – сăтăру» тесе лекет.
Таса – тăр, ут!
Хамăр юсанă самана – тупас ту пек:
Çĕнетрĕ çăлпа.
Чĕртĕп хăйă:
*Йăх пĕтрĕ чаплă çĕртен ĕçке путса...*
Путана ма сăнас уйрăм
«Ах, Турă, тасат!» – текелесе?
Турă, тăс уссуна!
Сулла, Сехетĕмĕр, уруна!
Мăнук, çакна каласа тасал
(ак хам ăс парас та):
«Вăхăт усĕ пехетлĕ тĕлне...»
Ислетет çумăр – ух!
Утар Уява юсанса.



* * *

Хёлё! – Хёльел!
*Этемлёхён питёрёнми лёпке.*
«Пут, çиçен ир, пут, Ту ен», –
ёнёрё çăл.
Шăтнă мăш кăкна каю тени...
Тутуна хуп нăкă.
Такам тунать, сăнать:
е пит – тур-ăшăм, хушпу-тухьям, аркăм?
*Саккăма тёрек – сётел:* вит те вит.
Апăс асăннă –
тытăн çывхарма, тăванăм.
Иртет пёри.
Çирёп тетрим ăна – вăтамрах,
выçнă, тытăннă сасăпа тивет:
«Тивлет ёскерё* тамăк-касмăкра...»
Май ху туп
шух мăшăр уттипе тан ăстан утма.
Катăкăн пух
ану тутине туякан кăкшăмăн,
тăшлă çёрён ёне-ут туприне.
Çиç ту пек! –
пёл: им нёрё типнё...
Хёл! Ме телейлё хёлёх!

Ёскер* – япала.

* * *

Ыр ăс çук.
*Сăнакан Ăс-и – халăх куçĕ.*
Çук пархатар харамах аптратмĕ:
тӳнес е Турăпа тӳнер?..
Ӳкĕнĕç хăй алшăлу кĕлли пĕлнĕ:
тĕл лекрĕ!
«Йĕм тĕп çĕре лекет» текелерĕç... –
*пĕтмĕ йĕркеллĕ, тĕнлĕ, пиллĕ,*
*«кулăшла» йăх!*
«Çĕнĕ кӳренӳ – тапăру» тесен,
ӳтĕм, тарт (паха мар!) ахрата!
Х(ă)рап: куçĕ çук!..
Хăлах-и сăнакан?..
Ăс – куçсăр-и?

* * *

Атă хăв халь – лапрара...
Çак аслă таврара –
вăхăту çитет, аппа –
ватă хисепĕ ерĕ...
*Чĕрӳнте чипер ĕмĕт-и, пичче?*
Чĕл те чипер-и?
Пилли, çутал –
сăвапла сухалла пĕркеленес сăна мар.
Уй çеçки чĕрĕ кĕмĕлĕччĕ –
виçеллĕ пӳ-çурăмăр!
(Усмăр – уса* тытнă таса туна!)
Аппана вăтантаратна,
мана, тусана,
тапăр ут тĕпĕртетĕвне, тăрие,
тӳпе сыхлама тупăшнă Пихампара...
Чарап: ма хыпăн?..
Шăпу та – мал хисепӳ:
те ырă? Тен, вĕтетрĕ: «пĕт»?..
Турăпа тана сутана мантаратна?..
Тăван! Аппа!
Ану таса,
Тăн тытас:
Урăм-сурăм ăру çӳпĕлле çивĕч.
Чĕлĕмĕ кĕрĕ – чик çеç –
юраман ăссене...

*Лекрĕ, паллах,*

*усалпа вăслату çилли пире...* –

пичетлĕ чеччи питĕмĕре пичет

(нӳрĕ чĕрейĕпе* сыхă!)

Тав, аппа-тети!

*Çутă хăварар ватăлса.*

*Каçарар, паллах, вăхăта.*

Уса* – пас.

Чĕрей* – пит.



* * *

Хăюра сăнна, сăнара çырса, сана калап:
çак ман ал – туй мана,
суй мана – тăвам юп.
Астараç: «Тарăн ил!»
Юнашар ват ăрăва Мал хистенĕ:
*чĕри хăрас, тарас тусна ан юрат.*
«Сахал Унăн тусан паракан уйĕ», – терĕ,
Хура тени ют – ме,
лере – паха шурă тăватка-ал!
Парам хак пăлхава: шеп,
ырă чăваш та – путару,
ярса пусни – лакăм,
намăса кĕрĕç, тапаç – ўкин,
талкăшăн, тачкамас ўт –
çывхар, алт, ыр ăс сунам:
якаран усал хисепĕ,
*чурăс, йăваш ăратна мар _ ăс уна,*
«тăваткал»-и? – пырать ал,
халаллам çунат,
амансан асăн ăна
(манăн – ăсан!..)
Асна ма тан уçмалла? –
лахлатар-и пылак та вăтанусăр,
амантар ăша,
вăйсăр учĕпе сыхла –

сунара кайман уссăр ытларах,
выç, тӳс – амак чат нăшăклатни,
кӳ! çапать çĕрĕк...
*Асăм ан мăкалин,*
суп – асра юрату,
патша вăчăрипе шавах лăпках мар,
апла ак та вăтăр,
ушаха пер элем* туйине,
тару хĕретĕ юна –
карапна сутнăн ула, хастар,
*уйна ан сут!*
Сарат!
Сарă хирĕ чĕнет сыхлама!
Вăрă тавраш ан уйлин
ăрат çаратса пуйма!
Вăтанам, юсанам, ютланам каçпала –
Канас!
Асри çаран – ăсаннă сар уйăх...

Элем* – ялав.



* * *

Этем, ерсе ан тарăхтар Ăна.
Тату, паха, шухă юн –
акар асап та хуйхă...
(Юна – карă?)
Выçă-тутă хисепĕ чипер теç – нимĕрĕç,
Ĕмĕрӳ пӳр ĕмĕ...
Çĕмĕрӳ пӳр ĕмĕ...
Çĕрĕм!
Инçетре – пичĕпе сыхă-тутă çывăракан
уйăх,
Юхать пасаракан уйăх,
Ушаха путать, анăрать...
Хăратна? Эсремете!



* * *

Несĕлĕмĕн ĕмĕчĕ! Сĕнел!
Ихĕлти чĕрĕ,
чура чĕрĕ чунăра,
чарăну чĕрĕ, чару чĕрĕ...
Читлĕх иленĕçĕ – чĕмĕн, ĕмĕлĕсен..

* * *

Ахăл-ахăл ахрăм,
Ах, ахăл-ахăл...
Çук, эпĕр – ĕнтрĕк çеç,
Çеçке пек,
Çеçке пек çеç сап-сар...
Усăр уйрăм ăса –
Тупăр-и хал, усçан?
Ăру капăр ак:
ни çул усçтаракан,
ни çар...
Тулхăрать юру тасалса.
Ху та хам:
«Хунар!» – арку питлевĕ.
Хăруш-и – сисес-и? – сап-сар уйăх?
(*Ăру тĕнĕлĕ _*
*тымара – тăнла!*)
Хуçăк, куççăр уйăх
ушаха путать...
Усçнă чăн çулĕ хĕрелĕ
вĕри тусанпа сапăнса.

*(Кутăнла пачах урăх сăвă вуланать):*

Аснăп.
*Асапна сут ирĕ вĕлерĕ.*
Хĕл усçнă чăн çутату –
паха шурă юр.

Ăс çуккă – çухалнă:
тарам-и тĕлĕнĕ Турă хăй
(ураспа сисес-и?)
си шурă хĕвелти пукраран –
ухмаха тухасла сатур...
Уй! Тарăх лутра çынна:
карать – çул уçин! – карăпа
курăнас çулах...
Ырă: путас
ăмăр юрă çурас пас-çеçке пек
(Çеçке пек çеç! Çеç!..)
кĕрт нĕрĕ пек
уçлăха... -лăха...
хамăр халăха... -лăха...



# ТĂВАН ÇĔРШЫВА



«...Чĕлхе çухалчĕ... Çĕршыв вилет пулсассăн,
Кама эс кирлĕ, юррăм... Кама? Кала!»
Çеçпĕл Мишши

Ху чĕннĕ, сĕннĕ чух –
харам марах – ăннă Вăйă!
Витетĕп хама хамах...
Пĕтет-и вăй? –
*Ăвăннă харам марах!*
Хам ăспала калап сăмах:
Çуралнă ен хĕлĕхне ăнла, Руç!
Ăру – ютă,
хăватăр – уй мар: наян...
Ту витлĕ: «Хитре витен-иç!»
Хĕлĕх пек ӳкеп.
(Пиçен çук!..
Ĕнеллĕ, тен? Е пӳ тасатнă?..)
Юрă пухăннă вырăну – юн, уй...
Çĕр-и хытах уйра – тар.
Юрăпа шăнтар-ăшăнар –
йăхна хăпартайăр-и?
Эмел-и, ас-и чану – чăн ту.
Е пит, Турă, йăваш-им ху пач:
хупаç, кур, ăса, вăй-хална...
*Ман сас – кĕлĕ*
(Ухăн, тыт ара самант Ялава):
Ырра чан! (Анни, çырлах!) Ырра!

Чан-н!..
Усал уяра чану:
сăна, янрав та пушă –
хушас çунат аманнă енне çак.
Ӳлĕм ĕненӳ тени çутă.
Хăвна çухатнăшăн та, Руç,
ак пăлхат ху мана:
*малта – юрă пек эп, ăру!*
Ятла мана!
Мухтах, лăпка çуратнăшăн та!
Хуçан вăхăту çине тӳнен ĕмĕлӳ –
каç енне...
Ăнна ма тан уçса
(шухăшу патвар – наян ăсу)
начара юлас?
Ун начарри – халри çынна начарри.
Авал ятна масара* тытнă ху:
ĕлĕк сасна
манлах йăвасăр,
укçа-пухча пухми
шав ăйăр уттипе утнă,
чуна, чыса, илеме ырă ятра пăхан
хăйранă-шăратнă!
Шапăр! – уйра тар юхать-и?
(хирĕç – юну, юнăр...)



Ывӑннӑ: хупӑр уйӑн
таса тӳпене тӗлленӗ куҫне...
Ҫип пек ӳкеп хӗлӗх ҫине,
тиверт ихӗлти вутна:
*янрам – Юрӑ та Вӑхӑту!*
Юрӑ – ҫуралнӑ ен!
Хӗлӗхне ӑнла, Руҫ!
Хам ӑспала калап сӑмах:
*Харам марах – ӑннӑ Вӑйӑ!*
Витетӗп хама хамах...
Пӗтет-и вӑй? –
Ӑваннӑ харам марах
ху чӗннӗ, сӗннӗ чух!

Маса* – тулаш илем, килӗшӳллӗ сӑн-сӑпат.
Кунта тасалӑх пӗлтерӗшлӗ.



150,-€